П.Хусанкай çуралнăранпа – 100 çул

# ПОЭТСЕН ТУСЛĂХĔ

"ЧĂВАШСЕН пĕр лайăх сăмах пур – юлташ пултăр хăвăнтан маттур!" – тесе çырать Митта Ваçлейĕ. Тем пекех тĕрĕс калană поэт – çамрăксене кампа юнашар утмаллине вĕрентсе сăвăланă сăмах ăсти!

Миттапа Хусанкай туслăхĕ поэзи урлă уçăлать. Вĕсем пĕр-пĕрин патне çамрăклах çыру çӳретнĕ. Акă мĕн аса илет Петĕр Хусанкай хăйĕн çывăх та шанчăклă юлташĕ пирки: "Шупашкарта ялкорсен пухăвĕ пуçтарăннăччĕ пулас. Митта Ваçлейне эпĕ халĕ тĕрленĕ шурă кĕпепе, çĕнĕ çăпатапа, улăм шлепкепе куратăп. Хаваслă, йăлт-ялт куçлă, хастар йĕкĕтчĕ вăл. Çĕнеле пуçланă чăваш ялĕн каччи"...

Акă мĕн çырать çамрăк Митта Хусанкай патне çырнă пĕр çырăвĕнче: "...сăмах паратăп: эпĕ çавă ĕçе, чăваш халăхне малалла ярас йĕркене, нихăçан та, хамăн ĕмĕр иртсе каймасăр та пăрахас çук!"

"Туптанса, хăйранса, пиçĕхсе çитнĕ хурçă пек янăрать Митта çырăвĕсенче тăван чĕлхе. Пурнăç хуранĕнче шăраннă кăмăлĕ ылтăн пек таса" тесе çырать поэт.

Юхма енчи çыравçăсемпе Петĕр Хусанкай хушшинчи туслăх пĕр çула кăна мар, чылай-чылай вăхăта тăсăлнă. Пĕр-пĕрин патне çырусем çӳретсе чунĕсене уçнă.

Илсе пăхăр-ха Хусанкай Митта Ваçлейĕ патне 1955 çулта янă çыру йĕркисене:

"Ырă кун пултăр, Ваçлей! Санăн кăмăлу ĕлĕкхи пекех шухă, авкаланчăк, çутă, ырă... Мĕнле каламалла ĕнтĕ? Çап-çамрăк йĕкĕт эсĕ. Геннадий Айхин 5 сăввине ярса паратăп. Вуласа тухсам. Хăйĕн шырани пур пек. Йĕрке хушшинче вуламалласкерсем. Çапла пулаççĕ те пулĕ ĕнтĕ хамăртан пысăкрах культура сыпса пăхнă яшсем. Чăвашла интеллигенци ӳстермелле-çке. Геннадин ăсĕнчи шухăшĕсем çавна кура пек".

Çапла майпа Геннадий Айхи пултарулăхне асăрхакансем тата малалла аталанма çул уçса паракансем Миттапа Хусанкай пулнă. Чăваш халăх поэчĕ Геннадий Айхи тĕнче литературин картлашки çине хăпарма пултарни пире, патăрьелсене, уйрăмах савăнтарать. Ахальтен мар Геннадий Айхи аслă юлташĕ, вĕрентекенĕ пирки çакăн пек ăшă сăмахсем çырман пуль: "Петĕр Хусанкай, Петĕр пичче... – эпĕ ăна яланах поэзири хамăн пĕрремĕш Вĕрентекен пек ырăпа, тав туса аса илетĕп. Пысăк культурăллă поэт, виçене çав тери вăйлă туйнă, Верлен кĕвĕлĕхне чуна илнĕ Хусанкай чăваш литературине Европа поэзийĕн жанрĕпе формине нумайăшне кĕртнĕ, хăйĕн лирикинче чи çӳллĕ шая çитернĕ. Хусанкайра пĕтĕмпех пур, – тетĕп эпĕ яланах".

Патăрьелне час-часах килсе çӳренĕ поэт. "Эпир чăваш çыравçисем" сăвва Петĕр Хусанкай 1969-мĕш çулхи пушăн 21-мĕшĕнче Патăрьелне килсен Алексей Талвире халалласа çырнă.

**Çĕршывăн, нацин, сăвăçсен**
**Чи пысăк пĕрлĕхĕ – чĕлхе.**
**Эпир чăваш чĕлхипелен**
**Кăкарăннă ĕмĕрлĕхе.**
**Эпир – чăваш çыравçисем,**
**Ватти, вăталăххи, яшши,**
**Эпир – сăмах шыравçисем,**
**Сăмахĕ вилĕмсĕр йышши!**

Чăннипех те Петĕр Хусанкай Патăрьелсене сума суни, анатри чĕлхен сăмах пуянлăхĕпе кăмăллă пулни сисĕнет.